# Сказка Золотой мешочек



Пуранн̆ă тет ĕлĕк-авал пĕр карчăкпа пĕр старик. Вĕсен икĕ ывăл пулнă. Ывăлĕсем ӳссе ҫитсен карчăкпа старик вĕсене авлантараççĕ те уйăрса кăларса яраççĕ. Хăйсем нумай та пурăнаймаççĕ, часах вилеççĕ. Аслă ывăлĕ ашшĕ-амăшĕн мулне илсе юлнипе питĕ пуйса кайнă. Кĕçĕнни çав тери чухăн пурăннă. Çитменнине, унăн тăхăр ывăл пулнă, вĕсене тăрантарма унăн кашни çулах тырри çитмен.

Кĕçĕн ывăлĕ Йăван нихçан та пăрçа акса курман пулнă. Пĕрре вăл шухăша каять: «Эпĕ вĕт нихçан та пăрçа акса курман, çавăнпа манăн тырă пулмасть-тĕр», — тесе шухăшлать. Тепĕр çур аки валли хĕлле ыйткаласа çӳресе пĕр çур пăт пăрçа вăрлăхĕ тупса хурать вăл.

Акă, çуркунне çитрĕ, анчах Йăванăн пăрçа акмалли çĕрне сухалама лаши те çук. Йăван пиччĕшне кайса йăлăнать:

— Пăрçа çĕрне сухаласа акмашкăн лаша памăн-ши? — тет.

— Пăрçуна çурмалла тăвăн-и, вара парăп, — тет пиччĕшĕ.

— Юрать, — тет Йăван, — пур — пĕрле, çук — çурмалла.

Вара ăна пиччĕшĕ пăрçа акса парать.

Пăрçа питĕ те лайăх шăтать. Йăван пĕрре хире кайса пăхать те пăрçа лайăх шăтнине кура килне çав тери хавасланса таврăнать. Тепре каять: пăрçа шап-шурă чечеке ларнă. Виççĕмĕш хут каять. Пăхать — пăрçине Тăм вĕтеленĕ кайнă. Тытăнчĕ хай Йăван тарăхнипе Тăма хăваламашкăн. Эх, хăвалать, эх, хăвалать! Хăваласан-хăваласан, Йăван Тăма хăваласа çитрĕ. Вăл вăрманта,

тунката ҫинче, сухалне тураса ларать-мĕн. Йăван ăна тӳрех сухалĕнчен ҫавăрса илчĕ те лăскама пуҫларĕ:

— Мĕн тума эсĕ манăн пăрҫана пĕтерсе кайрăн? Тӳле мана уншăн, атту халех сухална туртса кăларăп! — тет Йăван.

— Ан тив-ха, Йăван, — тет Тăмĕ, — ме сана уншăн пĕр хутаҫ.

— Мĕн тумалла сан ҫак ҫĕтĕк хутаҫупа? — тет Йăван ҫилленсе.

Тăмĕ калать:

— Киле кай та ачусене сĕтел йĕри-тавра ларт, унтан ҫак хутаҫа сĕтел ҫине силле, — тет.

Йăван пуҫне усса килне хутаҫа ҫакса таврăнать. Сĕтел йĕри-тавра ачисене лартать те силлет ҫĕтĕк хутаҫа. Хутаҫран мĕн кăна кирлĕ пурте сĕтел ҫине тăкăнса тăрать. Ҫапла Йăван лайăх пурăнма пуҫлать.

Кăна пиччĕшĕ курать те Йăвана калать:

— Атя, Йăван, манăн кивĕ капансене ҫак хутаҫпа улăштарар, — тет.

— Атя, улăштарар, — тет Йăван.

Хайхисем килĕшрĕҫ те хутаҫа кивĕ капансемпе улăштарса та хучĕҫ. Анчах пĕр-икĕ ҫул та иртмерĕ, Йăванăн ачисем кив капансене ҫисе те ячĕҫ. Каллех Йăван ҫука тăрса юлчĕ. «Капла эпĕ каллех ҫука тăрса юлтăм-ҫке? Ĕлĕкхи пек, кăҫал та пăрҫа акса пăхмалла мар-ши манăн?» — тесе шухăшлать вăл.

Шухăшлать те ҫуркунне каллех пăрҫа акса хăварать, пăрҫине ку хутра та Тăм илсе каять. Тытăнать Йăван Тăма хăвалама. Эх, хăвалать, эх, хăвалать! Хăваласан-хăваласан, хăваласа ҫитрĕ. Тăмĕ каллех вăрманта, тунката ҫинче сухалне тураса ларнă иккен. Ячĕ те илчĕ ăна Йăван кăвак сухалĕнчен:

— Мĕншĕн эсĕ манăн пăрҫана тустарса кайрăн? Тӳле хăвăртрах, атту халех сухална туртса кăларатăп! — тет.

— Ан тив-ха, Йăван, ме сана уншăн ылтăн хутаҫ парса ярам, — тет Тăмĕ.

Йăван ылтăн хутаҫа илет те килне таврăнать. Лартать ачисене сĕтел йĕри-тавра, силлет хайхи ылтăн хутаҫа, анчах хутаҫран вун икĕ салтак сиксе тухаҫҫĕ те тытăнаҫҫĕ вĕсем Йăван ачисене саламатсемпе хĕртмешкĕн. Йăван салтаксене аран-аран хутаҫа хăваласа кĕртрĕ. Унтан хутаҫне илчĕ те пиччĕшĕ патне кайрĕ, малтанхи ҫĕтĕк хутаҫпа улăштарса килчĕ.

Пиччĕшĕ ылтăн хутаҫ туяннипе савăнсах кайрĕ, хăйсен таврашĕсене - пуянсене пухса хăналантарма шухăш тытрĕ. Пухрĕ хайхи мĕнпур пуяна, хăй юриех ĕҫме-ҫиме нимĕн те хатĕрлеттермерĕ. Хăнасем пухăнса ҫитсен, Йăван

пиччĕшĕ ылтăн хутаҫа тытать те сĕтел ҫине силлет. Ак, сиксе тухрĕҫ тет

вуникĕ салтак, тытăнчĕç тет хăнисене саламатсемпе ăшалантармашкăн. Хăнисем хăшĕ чӳречерен, хăшĕ алăкран ӳппĕн-тĕппĕн туха-туха тараççĕ тет.

Хăнисем тепĕр кунне Йăван пиччĕшне суда параççĕ. Лешĕ Йăвана суда парать. Ак, Йăвана суда чĕнтереççĕ. Йăван суда ылтăн хутаç çакса каять.

Суд пуçлансан, Йăван хайхи хутаçне тытать те тӳресем умне силлет. Сиксе тухрĕç хутаçран каллех вун икĕ салтак, тытăнчĕç судьясене ăшалантарма. Шалт хĕнесе пĕтерчĕç. Судьясем Йăванран тархасласа ыйтаççĕ тет:

— Чар, Йăван, салтаксене, нимĕн те тумастпăр сана.

Анчах Йăван салтаксене юриех чармарĕ тет. Вара лешсем судьясене хĕнесе вĕлерсех пăрахрĕç тет.

Юмах юман урлă, хам пилеш урлă.

Мультимедийная онлайн-библиотека
“Сказки Поволжья”

Иллюстрированые и озвученные сказки народов Поволжья.